26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 15 ШАМАТКУН 243 (6904) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховный Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕ хаçачĕ

ПАРТИ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕН ЧИ ХИСЕПЛĔ ЗАДАЧИ

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕç кунсеренех сарăлса пырать. Çак ĕçе халь темиçе миллион совет çынни хутшăннă. Суйлав кампанийĕ пирĕн çĕршыври ĕççыннисен массисемшĕн политикăллă питĕ пысăк шкул пулса тăрать. «Суйлав кампанийĕ,—тет М. И. Калинин,—темиçе миллион çынна организацилет; вăл çав темиçе миллион çынна пĕтĕм государство политикин чи паха ыйтăвĕсем çинчен шухăшлаттарать. Суйлав кампанийĕ хăйĕн кулленхи ĕçне туса пыракан кашни çынна çÿлерех хăпартать... Кашни çын хăйне-хăй ахаль çын пек мар, революциллĕ çарăн боецĕ пек туйса тăрать, çак самантра вăл хăй Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхпа раснах çирĕп çыхăннине туйса тăрать».

Государство влаçĕн чи аслă органне суйлама хатĕрленесси парти организацийĕсем умне политика енчен калама çук пысăк та паха задачăсем кăларса тăратать. Парти организацийĕсен халăх массисен политикăллă активлăхне ертсе пымалла, агитаципе пропаганда ĕçне анлă сарса ямалла, суйлав кампанине Сталинла Конституципе тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положенипе» килĕштерсе ирттермелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пĕрлехи пленумĕ Чăваш республикинчи парти организацине СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçри пысăк задачăсене пурнăçа кĕртме хушса хăварчĕ.

Пленум çакна палăртса пачĕ: СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ суйлав çинчен, суйлав законĕ çинчен тата суйлав округĕсем çинчен указсем пичетлесе кăларнă хыççăн республикăри парти организацийĕсем агитаципе пропаганда тата организаци тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Округсенчи суйлав комиссийĕсене организациленĕ, суйлав участокĕсене палăртса хунă, суйлава кирлĕ документсем хатĕрлесе хунă, агитколлективсен тата агитаторсен руководителĕсене тупса çирĕплетнĕ. Агитаци ĕçне партипре тăман активистсене чылай хутшăнтарчĕç. Республикăри предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче суйлав законне, СССР Конституцине, Пĕтĕм Союзри Советсен VIII-мĕш Чрезвычайнăй съездĕнче Сталин юлташ тунă доклада тата Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарни çинчен Молотов юлташ тунă доклада вĕренме пур çĕрте те тытăннă. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсем те лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç.

Анчах та çакна палăртас пулать: нумай районсенче агитаципе пропаганда ĕçне тата организациллĕ ĕçе кирлĕ пек анлăн сарса яман-ха. ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн пленумĕ суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе начар туса пынине уйрăмах палăртрĕ. Суйлав участокĕсем агитаципе пропаганда ĕçĕн центрĕсем пулса тăман-ха. Шупашкар хулинчи парти организацийĕсем суйлав законне халăхăн пур сийĕсене те вĕрентес ĕçе организацилемен, интеллигенципе сахал ĕçлеççĕ, агитаторсем десятидворкăсенче, общежитисенче, рабочисен баракĕсенче тата уйрăм çуртсенче сахал пулаççĕ-ха. Партин хăшпĕр райкомĕсем агитаципе пропаганда ĕçне тивĕçлипе ертсе пыман пирки вăл ĕç чылай çĕрте идейăпа политика енчен начар пулса пырать. Çавăн пирки суйлавçăсем нумай ыйтусене ăнланмасăр юлаççĕ, массăллă агитацие хуласен, районсен, ялсен, предприятисен хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи задачисемпе тата ĕççыннисен кулленхи нушисене тивĕçтерессипе çителĕклĕ çыхăнтармаççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн пĕрлешÿллĕ пленумĕ йышăннă решенисем парти организацийĕсене пурне те организациллĕ ĕçе тата агитаципе пропаганда ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушаççĕ. Пирĕн парти организацийĕсем массăсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе пысăк опыт туяннă. Иртнĕ суйлав кампанийĕсенче парторганизацисем туяннă питĕ пысăк опытпа усă курмалла. Агитаципе пропаганда ĕçĕ совет халăхне большевиксен партийĕ тавра тата ытларах пĕтĕçтермелле, пирĕн çĕршыври мĕнпур граждансене суйлава активлăн хутшăнтармалла, государство влаçĕн чи аслă органне хамăр Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйлама пулăшмалла.

Халăха, уйрăмах суйлава пĕрремĕш хут хутшăнакан суйлавçăсене, суйлав Положенийĕпе паллаштарас ĕç тата мĕнпур совет гражданĕсене хăйсен Сталинла Конституцире кăтартса панă прависемпе обязанноçĕсене ăнлантарса парас ĕç партипе комсомол организацийĕсен агитаципе пропаганда ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнмалла. Агитаторсем суйлавçăсемпе калаçнă чухне пирĕн социализмлă демократизм çинчен лайăх та туллин каласа памалла. Парти организацийĕсен рабочисемпе колхозниксем валли тата интеллигенци валли СССР Конституцийĕн аслă принципĕсем çинчен, Совет демократийĕ çинчен, вăл буржуаллă демократирен малта тăни çинчен, Совет государствин вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсем çинчен тата совет халăхĕн пĕтĕм историре тата пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса организацилекен парти çинчен—Ленинпа Сталин партийĕ çинчен лайăх лекцисемпе докладсем вуласа памалла тата калаçусем ирттермелле. Суйлавçăсене пирĕн çакăн çинчен каласа памалла: Сталинла Конституцин ялавĕ айĕнче совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçăра çаплан çĕнтерчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн халăх, Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче, аслă Сталин ертсе пынипе, мирлĕ строительствăн пысăкран пысăк задачисене пурнăçа кĕртме пуçларĕ.

Парти организацийĕсен хăйсен агитаципе пропаганда ĕçне халăхăн тĕрлĕ сийĕсен нушисене тĕплĕн шута илсе туса пымалла. Хĕрарăмсем хушшинче тата суйлава пĕрремĕш хут хутшăнакан çамрăк суйлавçăсем хушшинче ĕçлесси çине уйрăмах хытă çаврăнса пăхмалла. Пленум парти горкомĕсемпе райкомĕсене хĕрарăмсемпе çамрăк суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме чи лайăх агитаторсене уйăрса хума хушрĕ, хĕрарăм суйлавçăсен тата çамрăксен пухăвĕсене нумайтарах ирттерме хушрĕ, çав пухусенче районсемпе хуласенчи партипе совет тата комсомол руководителĕсен доклачĕсене итлемелле.

Парти организацийĕсен халăхăн мĕнпур сийĕсене ăнлантарса парассине, кашни суйлавçă патне çитессине хăйсен боевой задачи вырăнне хумалла. Иртнĕ суйлав кампанийĕсенче парти организацийĕсем ĕççыннисен митингĕсемпе пухăвĕсене пухатчĕç, политикăллă докладсемпе лекцисем тата калаçусем ирттеретчĕç, хаçатсемпе радио урлă тата кино урлă агитацилетчĕç, суйлавçăсене хăйсен депутачĕ пулма тăратнă кандидатсемпе пĕрле пухса калаçтаратчĕç. Кăçал СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ чухне те ĕнтĕ çав майсемпе пурнăçпе те анлăн усă курмалла.

Иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнчи пекех, халĕ те массăллă-агитациллĕ ĕçĕн центрĕ суйлав участокĕ пулмалла. Çавăнпа та пленум республикăри партипе совет организацийĕсене суйлав участокĕсенчи ĕçе пур майпа та лайăхлатма, вĕсене суйлав умĕн тумалли мĕнпур ĕçсен центрĕсем туса хума хушрĕ. Çитес кунсенче суйлав участокĕсем валли çуртсемпе кирлĕ оборудовани тупса пама хушрĕ. Суйлав участокĕсенче, десятидворкăсенче, уйрăм çуртсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пымашкăн пленум парти организацийĕсене политикăна лайăх пĕлекен тата шанчăклă юлташсене уйăрса хума хушрĕ.

Суйлав умĕнхи кампанире культура çурчĕсем, вулав çурчĕсем, библиотекăсем тата заводсемпе колхозсенчи клубсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Вĕсем халăх хушшинче тĕрлĕ майпа ĕçлеме пултараççĕ. Пĕтĕм ĕç кунта культура учрежденийĕсенче ĕçлекен работниксен пуçарулăхĕнчен тата вĕсем политикăна мĕн тери лайăх пĕлнинчен килет. Вĕсем суйлавçăсен килĕсене суйлав çинчен калакан кĕнекесем илсе пыма пултараççĕ, хĕрлĕ кĕтессене йĕркелеме, суйлав участокĕсенчи агитпунктсене илемлетме, куçа курăнакан майсемпе агитацилеме пултараççĕ.

Массăллă агитаци ĕççыннисене хамăр республика умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилессипе таччăн çыхăнса тăмалла. Кашни ĕççыннине пĕтĕм халăхăн пурнăçĕпе культурине лайăхлатас ĕçре, Совет Союзĕн экономикăллă хăватне малалла тĕреклетес ĕçре хăйĕн ĕçĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса памалла. Çав вăхăтрах ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсен, ĕççынни депутачĕсен горсовет исполкомĕсен председателĕсен халăхăн кулленхи нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе халех кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Хуласемпе ялсенче тата предприятисемпе колхозсенче СССР Верховный Советне суйлас ятпа совет патриочĕсем пуçарса янă социализмлă ăмăрту кунсеренех сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Парти организацийĕсен халăх массисен çав патриотла çĕкленĕвне ертсе пымалла, хамăр Тăван çĕршывăн чапĕшĕн ĕçри паттăр тĕслĕхсене йышлăлатса пымалла.

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем СССР Верховный Советне суйлама пĕр çемье пек пулса хатĕрленеççĕ. Çитес суйлавра вĕсем совет çĕршывне тата большевиксен аслă партине чунтан-чĕререн парăннине, Сталин юлташа—Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн çав тери чаплă çĕнтерĕвне организацилекене, тĕнчери чи демократиллĕ Конституцие тунă çынна вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине тепĕр хут кăтартса парĕç.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Суйлава хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Нарат-Чакки ял Советне кĕрекен колхозсем СССР Верховный Советне суйлама тимлĕн хатĕрленеççĕ. Суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе ертсе пыма агитучастоксем организациленĕ, суйлав Положенине коммунистсемпе комсомолецсем тата учительсем ăнлантараççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕ 4 семинар туса ирттернĕ, вăл семинарсенче суйлав Положенийĕпе Сталинла Конституци çинчен докладсем туса панă. П. Иванов, М. Мартьянов агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче суйлав Положенине килĕрен çÿресе вĕрентеççĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ Таисия Матвеева вулав çуртĕнче суйлав кĕтесси организациленĕ. Суйлав законне ăнлантарас ыйтупа ятарласа 9 номер стена хаçачĕ кăларнă. Вулав çурчĕн совет членĕсем суйлава хатĕрленес ыйтупа консультацисем параççĕ. Агитаци ĕçне пĕтĕмпех кунта суйлава хатĕрленес ыйтупа çыхăнтарса туса пыраççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕ агитаторсен ĕçне тĕрĕслесе вĕсене тăтăшах пулăшса пырать.

Кашни каçах вулав çуртне 15—20 çынран кая мар пухăнса лараççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче библиотека пур. Вуламалли пÿлĕмре хаçат-журналсем, суйлав ыйтăвĕ тăрăх тĕрлĕ кĕнекесем пур. Стенасем çинче партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, лозунгсемпе плакатсем илемлĕн курăнса тăраççĕ. Вулав çуртĕнче суйлав ыйтăвĕсем тăрăх справка сĕтелĕ организациленĕ. Вулав çуртне пыракан колхозниксем унта кирлĕ ответсем илме пултараççĕ. Çавăнтах заем выльăвĕсне тĕрĕслессине организациленĕ. Парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем вулав çуртне ялан пулăшса тăраççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче халĕ драмкружок организациленĕ. Ăна вулав çурчĕн заведующийĕ ертсе пырать. Ял Советне кĕрекен «Опыт», «Молния» колхозсенче уйрăмах çамрăк суйлавçăсем хушшинче суйлав законне ăнлантарас ĕçе лайăх организациленĕ. Кружоксенче вĕреннисĕр пуçне, виçĕ хутчен докладсем туса панă. «Красное Сормово» колхозри комсомолецсем сасăламалли пÿлĕмсене валли кирлĕ хатĕрсем тупас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Списоксем тăвас ĕçре ял Советсене пулăшма комсомолецсем уйăрнă.

Агитколлектив руководителĕ С. Стеклов юлташ час-часах агитаторсене пухса вĕсемпе канашлусем туса ирттерет, агитаторсене тĕрлĕ кăтартусем парса ĕçре пулăшса пырать.

Н. АНДРЕЕВ.

Агитатор ĕçре

ЧКАЛОВСКОЕ. Перасковья Артемьева бригадир хыпарласа тухнă хыççăн, Сталин ячĕпе тăракан колхозри 5-мĕш бригадăри суйлавçăсем Мария Атнярова колхозница çуртне пухăнма пуçларĕç.

— Килĕрех, маларах иртĕр,—тет вашаватлă килхуçи крассын çутса.

— Килтĕмĕр ĕнтĕ, эпир тăтăшах çитсе тăратпăр, ан ятла ĕнтĕ,—ответлет ваттисен йăлипе 70 çулхи старик Герасим Михеевич Михеев.

— Какуй ятлама, хамăршăн пухăнатпăр вĕт,—кăмăллăн калаçать килхуçи Марийе инке.—Çак вăрçăра ывăлсемсĕр тăрса юлтăм та, эсир килнипе вара пÿрт тулнă пекех туйăнать.

Суйлав çинчен калакан плакатсемпе лозунгсем çапса тата çулпуçсен портречĕсемпе илемлетнĕ пÿрте суйлавçăсем йышлăн пухăнаççĕ. Кунта ватти те, çамрăкки те, арçынĕ те, хĕрарăмĕ те пур. Заняти пуçланиччен вĕсем пĕр-пĕринпе калаçса лараççĕ. Хĕрлĕ Çартан демобилизаци йĕркипе таврăннă Федор Тихонов фронтри паттăр çапăçусем çинчен каласа парать. Перасковья Атнярова Иваново облаçĕнчи торф кăларма панă задание тултарса каялла таврăнни çинчен пĕлтерет. Ик-виç çамрăк пĕрле пухăннă та суйлав ыйтăвĕсемпе тухнă боевой листока сасăпа вулаççĕ. Теприсем суйлав системи пирки агитатор хăй туса хатĕрленĕ схемăна пăхса тăраççĕ.

Бригадăри 73 суйлавçăран нумайĕшĕ пухăннă. Агитатор Раиса Исаева заняти пуçлать.

— Паянхи занятире эпир суйлав Положенин 6-мĕш сыпăкĕпе—депутата суйлама кандидатсем тăратмалли йĕркепе паллашăпăр,—тет Раиса Михайловна.

Ку тараччен Исаева юлташ бригадăра 8 заняти ирттернĕ. Вăл занятисене итем çинче те, агитпунктра та,—суйлавçăсем ăçта ытларах пулнă, çавăнта ирттернĕ. Кашни заняти хыççăнах Исаева юлташ занятисем çинчен дневник çырса пырать.

Çĕнĕ темăпа калаçу пуçлас умĕн агитатор иртнĕ занятире мĕн çинчен калаçнине кĕскен аса илет. Суйлавçăсем калаçăва активлăн хутшăннинчен агитатор сăмахĕ сая кайманни лайăх палăрса тăрать.

— Миçе депутатшăн сасăламалла пулать-ха пирĕн?—ыйтать агитатор.

— Виççĕшĕн,—ответлет Мария Баркаева колхозница.—Пĕр депутат—Союз Советне, Канаш суйлав округĕ тăрăх, иккĕ депутат—Национальноçсен Советне, Горькипе Чкаловски суйлав округĕсем тăрăх. Баркаева колхозница кашни суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенĕсем мĕн тĕслĕ пулмаллине те аса илет.

— Пирĕн Марье аппа отличница вăл,—шÿтлет кĕтесре ларакан пĕр çамрăк.

Агитатор çĕнĕ темăпа—депутата суйламалли кандидатсене тăратмалли йĕркепе паллаштарать. Малтан вăл суйлав Положенийĕн çакăн çинчен калакан сыпăкĕн статьисене вуласа парать, унтан хăйĕн сăмахĕсемпе ăнлантарса парать. Агитатор занятие тĕплĕн хатĕрленсе пыни палăрать. Çак темăпа вăл юри семинарта пулнă, хаçатсенче пичетлесе кăларнă консультацисене вуланă.

Агитатор сăмахĕ—пушă сăмах мар, витĕмлĕ те ăнланулла сăмах. Вăл депутата суйламалли кандидатсене тăратмалли йĕрке çинчен, депутат пулма кам пултарни çинчен, округри суйлав комиссийĕ кандидата суйлавчен миçе кун маларах регистрацилеме кирли çинчен каласа парать. Калаçу пынăçемĕн вăл хăй туса хатĕрленĕ схемăпа усă курать. Схема çинче суйлав участокĕсемпе округсем мĕнле тытăнса тăнине, участока мĕнле ялсем, округсене хăш районсем кĕнине кăтартса панă. Схемăпа усă курни суйлав системине лайăхрах ăнланма пулăшать.

Юлашкинчен Исаева юлташ ют патшалăхсенчи тата патша Российинчи суйлав йĕркисемпе паллаштарать.

Ĕлĕкхи суйлавсем епле иртни çине куçсан, Василий Туктинпа Герасим Михеев старикcем калаçăва хутшăнаççĕ.

— Ĕлĕкхи саманара пире суйлава хутшăнма ирĕк паман, суйлав прави пире тивмен, вăл право пуянсен аллинче кăна пулнă,—тесе пуçлать хăйĕн сăмахне Туктин юлташ.

Герасим Михеев ĕлĕкхи суйлавсем хальхи пек тÿрремĕн пулса иртменни çинчен аса илсе каласа парать.

Суйлав пирки пуçланнă калаçу чылая пырать. Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри ыйтусем парса агитатортан ыйтса пĕлеççĕ. Вĕсем Югославире, Болгарире тата Венгрире суйлавсем мĕнле пулса иртнипе интересленеççĕ.

Исаева юлташ агитаци ĕçне колхозри хуçалăх ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пыма пĕлет. Вăл хăйĕн сăмахĕнче шкул вуттине турттарма кирли çинчен, IV-мĕш кварталти финанс планне тултарасси çинчен тата ытти ĕçсем çинчен те каласа парать. Раиса Михайловна—опытлă агитатор. Иртнĕ суйлавра та вăл агитатор пулса ĕçленĕ.

Халĕ Исаева юлташ Ленинпа Сталинăн аслă партийĕн ретне кĕме хатĕрленет. Вăл большевиксен партийĕн программипе уставне çине тăрсах вĕренсе пырать.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Кино ÿкерме тытăнаççĕ

Çак кунсенче Шупашкара документлă фильмсен Куйбышев хулинчи киностудийĕн кино ÿкерекен ушкăнĕ килнĕ. Вăл Чăваш республикинче СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçсем тата мирлĕ аталану тапхăрне куçнă май республикăра мĕнле ĕçсем пулса иртнине ÿкерме тытăннă.

Кино ÿкерес ĕçе Борис Андреевич Тимкин оператор ертсе пырать. Вăл нумаях пулмасть демобилизаци йĕркипе Хĕрлĕ Çартан таврăннă.

Вулав çурчĕ япăх ĕçлет

Красноармейски районри Карай вулав çурчĕ хăй вăхăтĕнче лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсенчен пĕри пулнă. Хальхи вăхăтра асăннă вулав çурчĕн ĕçĕ пачах та палăрмасть. Вулав çурчĕ валли ял Совечĕ пÿлĕм те тупса паман, вăл ял Совет канцелярийĕн коридорĕнче вырнаçнă. Кунта мĕн пурĕ те пĕр сĕтелпе пĕр шкаф анчах ларма пултарать. Çавна пула ĕнтĕ библиотекăри кĕнекесем, патефон пластинкисем, хуткупăс тата вулав çурчĕн ытти япалисем те çухалса пĕтнĕ.

Ял Совечĕ (председателĕ С. Гаврилов юлташ) вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсен ĕçне лайăхлатма тăрăшмасть. Ял Советĕнче виçĕ колхоз клубĕ шутланать, анчах вĕсенчен пĕринче те клуб заведующийĕсем çук. «Большевик», «Красная звезда» колхозсенче клуб çурчĕсенчен складсем туса хунă.

Вулав çурчĕн заведующийĕ Димитриев юлташ хăйĕн ĕçĕ çине сиелтен çеç пăхать. Вулав çуртĕнче те, ял Советĕнче те стена хаçачĕсем тухмаççĕ, çĕнĕ хаçатсем тупса вулама май çук.

Халĕ, СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра, ялсенчи культура учрежденийĕсен ĕçне пур енчен те вăйлатса пымалла. И. ПЕТРОВ.

БИРНС ГОСПОДИН МУСКАВА КИЛНĔ

Декабрĕн 14-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс господин Мускава çитнĕ. Бирнс господинпа пĕрле Государство Департаменчĕн Советникĕ Коэн господин, Гарвард университечĕн ректорĕ Конант доктор тата Государство Департаменчĕн ответлă сотрудникĕсем Мэтьюз, Болен, Винцент господинсем, Кэлли полковник килнĕ.

Центральный аэродромра Бирнс господина СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, США-н Мускаври посольствин советникĕ Кеннан господин ертсе пынипе посольство членĕсем, Британин ССР Союзĕнчи посолĕ Керр господин тата СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем тухса кĕтсе илнĕ.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Пĕрлешÿллĕ Штатсен посолĕ Гарриман господин Центральный аэродромра пулман, мĕншĕн тесен çанталăк япăх тăнине пула самолета урăх аэродромра йышăнма шутланă. Вĕсем çав аэродрома кайнă пулнă. Аэродрома Америкăн тата Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ.

БИРНС ГОСПОДИН КАЛАСА ПАНИ

Аэродромра Бирнс господин микрофон умне тухса çапла каланă: «Эпĕ хама Мускавра пулнăшăн питĕ телейлĕ шутлатăп. Эпĕ хамăн тусăма тата хампа пĕр евĕрлĕ ĕç тăвакана Молотов господина татах курма пултарнăшăн та хама телейлĕ тесе шутлатăп.

Пирĕн калаçусене пула пирĕн çĕршывăмăрсем татах та çывăхланассине эпĕ шанса тăратăп. Вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлеме пуçлани мирлĕ вăхăтра та малалла аталанса пымалла».

ВЦСПС-ра

Шкул ачисен хĕллехи канăвĕ

ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсене шкул ачисене хĕллехи кану вăхăтĕнче культурăллă кантарас ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхма хушнă.

Профсоюз организацийĕсене кану вăхăтĕнче çĕнĕ çул елкисем, утренниксем тума, Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе, ученăйсемпе, писательсемпе, стахановецсемпе тĕл пулса калаçмалли вечерсем тума хушнă. Çавăн пекех тата художествăллă пултарулăх вечерĕсем, кинофестивальсем, çар вăййисемпе спорт вăййисем, йĕлтĕрлĕ походсем тума хушнă.

Хĕллехи кану вăхăтĕнче мĕнпур клубсене, культура дворецĕсене тата хĕрлĕ кĕтессене ирхине 11 сехетрен пуçласа каçхине 6 сехетчен ачасене культура енчен пулăшма параççĕ. Кану вăхăтĕнче туса ирттерекен мĕнпур культурăллă ĕçсене педагогсене, пионер вожатăйĕсене, шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсене тата аслă классенче вĕренекен ачасене хутшăнтармалла.

ВЦСПС секретариачĕ Совет Союзĕнчи 52 пысăк хулара—Мускавра, Ленинградра, Киевра, Минскра, Тбилисире, Бакура, Ташкентра, Таллинра, Вильнюсра, Ригăра, Львовра, Ужгородра тата ыттисенче те — пĕтĕм хулари çĕнĕ çул елкисем туса ирттерме йышăннă. Профсоюзсен Центральный Комитечĕсене кану вăхăтĕнче профсоюзсен санаторийĕсене, кану çурчĕсене, ача площадкисене шкулта вĕренекен 100 пин ачана яма хушнă. (ТАСС).

Государствăна тырă парас ĕçе чăрмантаракансем

СĔМĔРЛЕ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 42 колхозран 18 колхоз çак вăхăта çитсе те государствăна тырă парса татман, çавна пула район паянхи кун тĕлне государствăна тырă памалли плана 87,9 процент кăна тултарнă. «Путь Ленина», «Заря», «Авангард», «Полярная звезда» колхозсем декабрь уйăхне кĕнĕренпе пĕр килограмм тырă та леçмен. «Полярная звезда» колхоз председателĕ Осипов юлташ çапнă тырă пур çинчех памасăр тытса тăрать. Хĕлле çапнă тырă ытла та чĕрĕ, государство илес çук,—тесе сÿпĕлтетсе ларать. Çав вăхăтрах чĕрĕ тырра типĕтес ĕçе организацилес тесе нимĕн те тумасть.

«Первое мая» колхоз государствăна тырă парса татман. Кунта тырă вырăнне аш-какай парсан лайăхрах тесе шутлаççĕ. Хăйсем çав вăхăтрах государствăна аш-какай парса татман.

«Путь Ленина», «Заря», «Авангард» колхозсем авăн çапас ĕçе пачах çителĕксĕр организациленĕ. Ирхине 10 сехетре авăн çапма тытăнаççĕ, каçхине 5 сехетрех итемре ĕç чарăнать. Çапнă тырра типĕтес ĕçе йĕркелемен. Çак колхозсен государствăна 10—15 центнершар кăна тырă памалли юлнă. Колхоз председателĕсем тăрăшнă пулсан, вĕсем ноябрь уйăхĕнчех парса татма пултарнă. Кунта государствăна тырă парса татас ĕçе чăрмантараççĕ. Государствăна тырă парса татма условисем пур,—чăрмантаракансене ответ тыттарни кирлĕ.

А. ТАНЬКОВ

Республика тăрăх

И. В. СТАЛИН ЮЛТАШ КОНСТИТУЦИ ПРОЕКЧĔ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОКЛАД ЧĂВАШЛА ТУХНĂ

Чăвашсен государство издательстви И. В. Сталин юлташ 1936 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII Съездĕнче «ССР Союзĕн Конституци проекчĕ çинчен» тунă доклада чăвашла пичетлесе кăларнă.

АГИТАТОРСЕНЕ ВАЛЛИ КĔНЕКЕСЕМ

Суйлавçăсем хушшинче ĕçлекен агитаторсене пулăшма Чăвашгосиздат уйрăм кĕнекесем кăларать. Вĕсем хушшинче— М. И. Калининăн «Совет государствин вăй-хăвачĕ», Поспеловăн—«Совет патриотизмĕн вăйĕ», ССР Союзĕн Верховный Советне суйламалли Положение ăнлантарса паракан статьясем т. ыт. те пур.

ЮРĂ КĔНЕКИСЕМ

Вырăнсенчи хор кружокĕсене кирлĕ музыкăллă репертуар парас шутпа Чăвашгосиздат «Боевые песни» ятлă юрăсен кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Унта халăх хушшинче сарăлнă 50 совет юрри кĕнĕ. Кĕнекен тиражĕ—20.000 экземпляр. Çак кунсенче «Вырăс халăхĕн юррисем» [illegible] тухаççĕ.

МАМĂК ТИР ХАТĔРЛЕÇÇĔ

Чăваш республикинчи вăрмансемпе уй-хирсенче мамăк тирлĕ тискер кайăксем йышлăн пурăнаççĕ. Сăсар, пакша, мулкач, пăсара тата ытти çавăн пек тискер кайăксене те тытса, вĕсен мамăк тирĕсене государствăн тир хатĕрлекен организацийĕсене парас тĕлĕшпе çĕршер сунарçă ĕçлеççĕ.

Районсенчи мамăк тир хатĕрлес тĕлĕшпе «Заготживсырье» конторисем ĕçлеççĕ. Мамăк тирлĕ тискер кайăксене тытас тĕлĕшпе чылай районсем лайăх ĕçлеççĕ. Красноармейски, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Йĕпреç, Етĕрне, Пăрачкав районĕсем мамăк тир хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнă. Красноармейски районри «Заготживсырье» контори (директорĕ Николаев юлташ) мамăк тир хатĕрлемелли плана 177 процент тултарнă. Сĕнтĕр районĕнчи сунарçăсем мамăк тирлĕ тискер кайăксем тытмалли плана 104 процент тултарнă. Çак районри Шатракасси ял Советĕнчи сунарçă Осетров юлташ кăçал 3 тилĕ, вуншар мулкач тата 2 кашкăр тытнă. Çакăн пек лайăх ĕçлекен сунарçăсем кунта татах та нумай.

АШШĔ ТЕ, ЫВĂЛĔ ТЕ—ТИМĔРÇĔ

ИШЛЕЙ. Анат Кĕнер ял Советĕнчи «XI лет Чувашии» колхозри 63 çулхи Василий Павлович Зверев 50 çул хушши ĕнтĕ тимĕрçĕре ĕçлет. Унăн ашшĕ те ĕлĕк тимĕрçĕ пулнă. Зверев юлташ хăйĕн Анатолий тата Николай ятлă ывăлĕсене те тимĕрçĕ ĕçне вĕрентнĕ. Николай нимĕçсен фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн кĕрешсе вилнĕ. Халĕ В. П. Зверев хăйĕн Анатолий ывăлĕпе таврари 18 колхозра тимĕрçĕ ĕçне тăвать.

ТĔРĔ ТĔРЛЕКЕНСЕН КРУЖОКĔ

Куславкка районĕнчи Çатрăкри Суворов ячĕпе тăракан колхозра хĕрлĕ улах усă. Хĕрлĕ улаха колхоз хĕрĕсем йышлăн çÿреççĕ. Унта вĕсем тĕрĕ тĕрлекенсен кружокне организациленĕ. Кружока вулав çурчĕн заведующийĕ Осипова юлташ ертсе пырать. Улахри хĕрсем тĕрĕ тĕрлеме вĕреннипе пĕрлех кĕнеке-хаçатсем вулаççĕ, суйлав законне вĕренеççĕ тата ССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене ирттерме хатĕрленеççĕ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

ДЕКАБРĔН 12-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Трибуналăн ирхи ларăвĕнче Америка айăплаканĕсен представителĕ Додд сăмах каланă. Вăл трибунала ĕнерхи каçхи ларура мĕн каланине аса илтернĕ. Вăл айăпланакан Франкăн дневникĕ çинчен каланă чухне Франка хӳтĕлекен çапла каланă: айăплакан çав документпа тĕрĕс усă курмасть, мĕншĕн тесессĕн вăл унăн пĕр пайне çеç вуласа парать, тенĕ. Хӳтĕлекен Франкăн темиçе пысăк том йышăнса тăракан мĕнпур дневникне тата унăн тухса каланă тăвата сăмахне пама ыйтнă. Çав сăмахсене Франк 1942 çулта çырса хатĕрленĕ пулать те ăна Гитлер йышăнман пулать.

Трибунал председателĕ лорд Лоуренс çав хӳтĕлекене çапла калать: Франк дневникне хӳтĕлекенсен пӳлĕмне хурăпăр, тет.

Кун хыççăн айăплакан Додд гитлерла каварлашусăсем Европăри çитĕннĕ халăха нимĕç чурисем туса хуни çинчен калама пуçлать. Хĕвелтухăçĕнчи территорисем тĕлĕшпе ĕçленĕ министрăн Розенбергăн архивĕсенче тата ĕç вăйне мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçленĕ уполномоченнăйăн Заукелĕн архивĕсенче тупнă йышлă документсемпе усă курса, айăплакан çакна кăтартса парать: гитлеровецсем вырăссене, украинецсене, поляксене, французсене, бельгиецсене, голландецсене тата ыттисене те нимĕç чурисене миллионшарăн темиçе хут та хăваласа кайнă. Гитлеровецсем çак ĕçре нимĕнле майран та йĕрĕнсе тăман. «Ĕç вăйĕ пухасси» çынсене ухутана сӳресе тытнă пекех пулса тăнă.

Çавăн пек «пухнине» хирĕç оккупациленĕ районсенчи халăхсем хытă кĕрешнĕ. Гитлерла каварлашусăсем ĕç вăйне вăрçă вăхăтĕнчи пек ирĕксĕрлесе пухма шут тытнă. Экономикăпа план бюровĕн ятарласа пухнă ларăвĕнче Заукель çапла каласа панă: «ĕç вăйĕ пухакансене» час-часах хĕçпăшаллă çынсем тапăнаççĕ. Нимĕçсен Варшаври ĕç вăйĕ пухакан бюровĕн начальникне кăнтăрлах, хăйĕн кантурĕнчех персе вĕлернĕ. Заукель «ĕç вăйĕ пухма» полицейскисем пама ыйтнă тата Розенбергран пулăшу ыйтнă.

Айăпланакан Заукель 1942 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнче Розенберга янă çырура оккупациленĕ районсенчен ĕç вăйне ирĕксĕрлесе Германие илсе пырас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă. «Фюрер васкасах хĕçпăшалланмалли çĕнĕ план çырса хатĕрленĕ,—тесе çырать Заукель,—çав плана пурнăçа кĕртмешкĕн ют çĕршыв рабочийĕсене тата 2 миллион çын мобилизацилемелле пулать. Фюрер мана çĕнĕ правасем пачĕ тата мана Германи промышленноçĕ валли кирлĕ рабочисене Германире, протекторатра, Польша губернаторствинче тата оккупациленĕ ытти территорисенче те пухма хушрĕ. Çĕнĕ ĕç вăйне пуринчен ытла Хĕвелтухăçĕнчи нумаях пулмасть оккупациленĕ территорисенче, уйрăмах та Украинăри импери комиссариачĕнче пухмалла. Çавăнпа та Украинăри импери комиссариачĕн 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен 225.000 рабочи тупса памалла, 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне тата 225.000 çын тупса памалла».

Заукель рабочисем тупас ĕçре кирек мĕнле хаяр мерăсемпе те усă курма хушнă. Пăртак вăхăт иртсен, Заукель оккупациленĕ районсене хăйĕн представительне Пюкерта янă, ăна кашни кун 5.000 тарсă ярса тăма хушнă. Заукель хăйĕн 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче янă çырăвĕнче Розенбергран Германие куллен çакăн чухлĕ рабочи ярса тăма ыйтнă: Белоруссирен—500-шер çын, «центрти экономика инспекцийĕнчен»—500-шер çын, Украинăран—3.000-шер çын, «кăнтăрти экономика инспекцийĕнчен»—1.000-шер çын ярса тăма ыйтнă. Заукель çапла каланă: «1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, куллен тупса ямалли рабочисен хисепне икĕ хут ӳстермелле», тенĕ. Çырусем янипе канăçмасăр, Заукель хăй те оккупациленĕ районсене тухса кайнă. 1943 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче вăл Каунасра сăмах тухса каланă. Çав сăмахра вăл «Германие Литваран ĕç вăйĕ нумай ытларах яма» хушнă. Унччен вăл Рига хулинче пулнă, унта гитлерла комиссара 1943 çулхи августран кая юлмасăр Германие 183.000 çын яма хушса хăварнă, çав шутран 30.000 çын çамрăксем пулмалла, тенĕ.

Заукель приказĕсене пурнăçа кĕртме йывăр пулнă пулас. Унăн Германи çарĕнчен пулăшу ыйтмалла пулса тăнă: çав çарăн оккупациленĕ кашни районрах гарнизонсем пулнă. 1943 çулхи августăн 17-мĕшĕнче çар влаçĕсене янă çырура Заукель çав районсенче 1926-мĕшпе 1927-мĕш çулсенче çуралнă мĕнпур çынсене пухса Германие яма хушнă. Çав çынсене 1943 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕччен çырса тухмалла, тенĕ.

«Ĕç вăйĕ пухмалли кампани ăнăçлă иртнĕ,—тет айăплакан.—Çавăнпа Заукель ун чухнехи хĕçпăшал министрне Шпеера çапла пĕлтерме пултарнă: эпĕ сире 1943 çулхи октябрь уйăхĕччен пĕр миллион рабочи пама пултаратăп, унсăр пуçне тата ялхуçалăх валли 700.000 рабочи тупса пама сăмах паратăп, тенĕ. Гитлеровецсем çак ĕçе мĕнле майпа пурнăçа кĕртни çинчен пĕр вăтанмасăрах çырса кăтартнă. Заукель архивĕнче тупнă меморандумра çапла каланă: «Хальхи вăхăтра Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ çĕрсенче темиçе миллион рабочие кулăшла майсемпе пухаççĕ. Пирĕн вăрçă планĕсем, выçăпа вилнĕ шăнасем пек, пĕтсе ларнă хыççăн Германире рабочисем çитмен пирки çапла тăваççĕ ĕнтĕ. «Ĕç вăйĕ пухас» тĕлĕшпе эпир усă куракан меслетсем чурасемпе суту тунă вăхăтрах пулнă пулмалла. Çынсене ухутана сӳресе тытнă пек тытаççĕ. Сывлăха е мисе çултине пĕртте пăхса тăмаççĕ».

Оккупациленĕ территорисенчи халăх ĕç вăйне çавăн пек «пухнине» хирĕç вăйлăрах кĕрешме пуçланă, партизанла кĕрешĕве сарса янă. 1942 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче Розенберг Заукеле çакăн пек çыру янă: «Эпĕ илнĕ доклад çакна кăтартса парать: Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ районсенче партизансен отрячĕсен хисепĕ ӳсни—ĕç вăйĕ пухса янă чухне усă куракан меслетсенчен килет. Германие каймалли çынсем Германие каяс вырăнне вăрмана тараççĕ е партизансен отрячĕсене куçаççĕ».

Розенберг хăйĕн çырăвĕ çумне ĕç вăйне Заукель «мĕнле пухнине» кăтартакан доклада хушса хунă. Докладра çапла каланă: нимĕç полицейскийĕсем Германие ĕçлеме кайма килĕшмен çынсем пурăнакан ялсене пĕтĕмпех çунтара-çунтара янă. «25 рабочи яма хушакан приказ килсен,—тенĕ докладра,—никам та пымарĕ. Çитĕннисем пурте тарса пĕтнĕ. Вара Германи полицийĕ килчĕ те тарнă çынсен çурчĕсене çунтарма тытăнчĕ. Часах питĕ вăйлă пушар сиксе тухрĕ, мĕншĕн тесен икĕ уйăх хушши çумăр çуман. Çитменнине тата амбарсенче тырă пулнă. Мĕн пулнине каласа пама та çук. Пушар патне чупса пынă халăха пушара сӳнтерме чарчĕç. Чупса пынă çынсене полици хĕнерĕ тата тыта-тыта хупрĕ. Çав вăхăтра полицейскисем ытти çуртсене вут тĕртсе çӳрерĕç». Докладра малалла çапла каланă: ытти ялсенче (çав ялсен ячĕсем тăрăх пăхсан, вĕсем Белоруссири ялсем пулнă) полици заложниксем вырăнне старниксене, карчăксене тата ачасене тытса хупнă, ĕçлеме пултаракан çынсем Германие ĕçлеме каймасан, çав çынсене персе вĕлеретпĕр, тенĕ.

Айăплакан Додд çĕнĕ та çĕнĕ документсем вуласа парать. Вăл документсем çакна кăтартса параççĕ: «ĕç вăйĕ пухни»—çынсене ухутари пек тискеррĕн тытнă пулнă. Тытăннă çынсем хăйсем çеç мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те, ачисем те, инçетри хурăнташĕсем те питĕ пысăк асап курнă, вĕсене хĕненĕ, тыта-тыта хупнă тата персе те вĕлернĕ. Гитлеровецсем вăтам ĕмĕрте чурасемпе суту-илӳ тунă çынсенчен те иртернĕ. Ялĕ-ялĕпе çунтарса янă, пĕтĕм апат-çимĕç запасĕсене те çунтарнă районсенчи халăхсене выçăпа тата сивĕпе асапланса вилмелле туса хунă. Айăплакан пĕр документа вуласа парать. Унтан çакă курăнать: фашистсем чурасем тытса çӳренĕ пирки районсемпе округсем те пушхир пекех пулса юлнă—халăх тухса тарнă ялсене çĕрпе танлаштарса лартнă. Айăплакан çакна кăтартса парать: айăпланакан Розенберг, уйрăмăнах та Заукель, çакна пĕлнĕ, ку çеç мар, çавăн пек хаяррăн хăтланма вĕсем хăйсем хушнă. Додд суда пĕр фашистла ирсĕрĕн, Пауль Рааб ятлăскерĕн, Розенберг патне çырнă çырăвне парать. Çав çырура Рааб «ĕç вăйĕ пухас ĕçре» çитĕнӳ тунипе мухтанать. «Эпĕ Украинăри парăнман çамрăксене пирĕн приказсене пурнăçа кĕртме кирлине кăтартса пама шут тытрăм,—тесе çырать Рааб.—Эпĕ парăнманнисен çурчĕсене çунтарса яма хушрăм».

Малалла Рааб çапла каласа парать: «Халăх кăшт хирĕç тăма пуçласан, эпĕ каллех çынсене тыта-тыта хупма, ялĕсене туртса илме, çынсене лагерьсене яма пуçларăм. Нумаях пулмасть ĕçлеме янă çынсен пĕр ушкăнĕ хурала çĕнтернĕ те тĕрлĕ çĕре тарса пĕтнĕ. Каллех эпĕ питĕ çирĕп мерăсем йышăнма шут тытрăм. Тарнă çынсен çурчĕсене çунтарса ятăмăр». Рааб хăйĕн çырăвĕнче юлашкинчен çапла калать: вăл çынсене тыткаланă меслетсене Васильковри округ комиссарĕ тата Киеври генеральнăй комиссар пĕлнĕ çеç мар, вĕсем çав меслетсене ырланă та. Паллах ĕнтĕ, айăпланакан Заукельпе Розенберг çав мерăсене пурнăçа кĕртни çинчен пĕлнĕ тата çавăн пек тунине ырланă.

Халăх çав чура хуçисене хирĕç вăйлăрах кĕрешме пуçланăçемĕн çынсем тытма пысăкрах вăйсем янă. Полиципе çарсăр тата пулăшакан тĕрлĕ чаçсемсĕр пуçне, çак ĕçе гитлеровецсен хурал отрячĕсем те хутшăннă. Айăплакан СС чаçĕсемпе хăрушсăрлăх полицине панă питĕ секретлă приказа вуласа парать. Ăна 1943 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче çырнă. Вăл приказра çапла каланă: «Рабочи конторисен тата рабочисем пухакан комиссисен активлăхне ытларах пулăшса тăмалла. Вăйпа та усă курмалла пулать пуль. Ялсенче ухтарса çӳресе, кирлĕ пулсан, пĕтĕм яла çунтарса ямалла. Пĕтĕм халăха ирĕксĕрлесех комиссар патне ямалла».

Трибунал председателĕ сĕннипе, айăплакан çав приказăн пĕр параграфне вуласа парать. Унта çапла каланă: «Ачасене урăх пере-пере вĕлермелле мар». Çак параграф гитлерла бандитсем «вăйпа усă курни» тесе мĕне каланине кăтартса парать.

Додд тата çакна палăртса парать: çак тискер ĕçсене Розенберг пĕлнĕ, ырланă тата çавăн пек тума хушнă та. Айăплакан Житомир хулинче 1943 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче пулнă канашлу çинчен çырнă секретлă отчета вуласа парать. Çав канашлура Розенберг пулнă. Ăна генеральнăй комиссар Лейзер çапла каласа панă: ĕç вăйне ирĕксĕрлесе çеç, питĕ хаяр меслетсемпе çеç пухма тивет, тенĕ.

Çапла хăтланнă пирки оккупациленĕ районсен экономики пĕтĕмпех арканса кайнă. Додд 1943 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче Розенбергăн пĕр çывăх помощникне Рикке ятлă çынна çырса янă çырăва вуласа парать. Çырура çапла каланă: «СС отрячĕсемпе полици 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче тасатса тухнă пирки 115 пин гектара яхăн чи лайăх çĕр акăнмасăр выртать, мĕншĕн тесен ку районра халăх çук, ялсене çĕрпе танлаштарса лартнă».

Айăплакан малалла çакна кăтартса парать: гитлеровецсем Хĕвеланăçĕнче те—Францире, Бельгире, Голландире—ĕç вăйне çавăн пек майсемпех пухнă. Ĕç вăйне çавăн пек ирĕксĕрлесе пухса кайнине пула, пĕр Германи промышленноçĕнче кăна çичĕ миллион ытла ют çĕршыв рабочийĕ ĕçлесе тăнă, вĕсем 14 халăх çыннисем пулнă. Вĕсене пурне те тенĕ пекех Германие ирĕксĕр хăваласа кайнă, вĕсем тĕрĕссипе нимĕç чурисем пулнă. Заукель хăй те пĕр документра çапла каланă: 5 миллион рабочирен 200 пин рабочие яхăн кăна хăйсен ирĕкĕпе килнĕ. Ыттисене Германие ирĕксĕрлесе илсе килнĕ, тенĕ.

Трибунал ирхи лару хупăначчен айăплакан Доддăн сăмахне итленĕ.

ДЕКАБРĔН 12-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 12-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Америка айăплаканĕсен представителĕ Додд малалла каланă. Вăл Германире ют çĕршыв рабочийĕсене эксплоатацилени çинчен, тыткăна лекнĕ çар çыннисене тискеррĕн тыткалани çинчен, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери правăна пăснăшăн тата этемлĕхе хирĕç пыракан преступленисене тунăшăн Геринг, Розенберг, Кейтель, Заукель, Шпеер мĕн тери айăпли çинчен каланă.

Германие рабочисем çав тери нумай илсе пынин тĕллевĕ Германин çар промышленноçне ĕç вăйĕ çителĕклĕ тупса парасси пулнă. Гаагăри конвенцие пăсса, гитлеровецсем çар промышленноçĕнче Германие ирĕксĕр илсе пынă совет арçынĕсемпе тата хĕрарăмĕсемпе çеç усă курман, тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе те усă курнă. Вĕсем çав тыткăна лекнĕ çынсене те тискеррĕн тыткаланă. Çавăн пирки тыткăнри çынсем пĕтĕмпех начарланса çитнĕ тата питĕ йышлăн вилнĕ. Германи каторгинче совет çыннисене мĕнле тыткаламаллине гестапо шефĕпе СС начальникĕ Гиммлер хăй кăтартса панă. Айăплакан Додд Гиммлерăн 1942 çулхи февралĕн 20-мĕшĕнче панă циркулярне вуласа парать. Çав циркулярта «дисциплинăна пăснипе кĕрешесси» ятлă пай пур. Вăл пайра çапла каланă:

«Дисциплинăна кăшт çеç пăснине те хурал начальникĕн çийĕнчех палăртмалла, ăна эпир панă инструкцисем тăрăх палăртмалла. Хирĕç тăма парас мар тесе, хурал çав рабочисене хирĕç вăйпа усă курма пултарать. Çав фактсем çинчен рабочисене хăйсене каласа парас пулать. Дисциплинăна вăйлă пăснă пулсан, çавăн пек мерăсем çителĕклĕ мар пулса тăрсан, çав ĕçе государство полицийĕн хутшăнмалла; вăл вара хăйĕн аллинчи мĕнпур майсемпе те усă курма пултарать. Унăн çавăн пек рабочисене питĕ хытă тыткаламалла, правилăсене пăснисене концентрациллĕ лагерьсене ямалла е вĕсене хăйне уйрăм майсемпе тыткаламалла. Концентрациллĕ лагерьсене ахаль чухнехи майпах ямалла. Хăйне уйрăм майпа тыткаламалла тени—çакса вĕлермелле тенине пĕлтерет».

Айăплакан çакна уйрăмах палăртса парать: совет рабочийĕсемпе ытти çĕршыв рабочийĕсене тискеррĕн тыткаланăшăн Заукель уйрăмах ответлă пулса тăрать. Заукеле Гитлер 1942 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче, хăйне уйрăм декрет кăларса, ĕç вăйне мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй уполномоченнăй туса хунă. Анчах Гитлер çав декрет тăрăхах Заукеле тăвата çуллăх плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй уполномоченнăя Геринга пăхăнса тăмалла тунă. Айăплакан малалла Гитлер приказĕн çавăн çинчен калакан вырăнĕсене вуласа парать те вăл приказа, документ вырăнне хурса, трибунал протоколĕсем çумне хушса хурать.

1944 çулхи март уйăхĕнче Германин план бюровĕнче ĕç вăйĕ çинчен сӳтсе-явмалли хăйне уйрăм канашлу пулса иртнĕ. Çав канашлура хĕçпăшал министрĕ пулнă Шпеер сăмах тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: эпĕ çар промышленноçĕнче тыткăнри çынсемпе усă курасси çинчен Гиммлерпа калаçса татăлтăм. Гиммлер мана кашни уйăхрах 30—40 пин çын парса тăрĕ. Тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене ăçта мисе çын яни паллă, тенĕ Шпеер. Вăрçă промышленноçне çав рабочисенчен 30 процентне янă. «Эпĕ кун пирки яланах ӳпкелешетĕп», тенĕ. Çав канашлурах Заукель тата авиаци министерствинче ĕçленĕ Мильх сăмах тухса каланă. Заукель çар промышленноçĕнче тыткăнри çынсемпе усă курма кирли çинчен каланă. Мильх çапла каланă: авиаци министерствин представителĕсем тыткăнри çынсен пĕр пайне артиллери завочĕсене яма ыйтаççĕ, тенĕ. Гитлерпа Кейтель вăрçăри укрепленисене тунă çĕрте тыткăнри çынсемпе усă курма приказсем панă.

1941 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн начальникĕ Кейтель хăйне уйрăм приказ кăларнă. Унта çапла каланă: «Фюрер çар промышленноçĕнче тыткăнри вырăссемпе ытларах усă курмалли çинчен приказ пачĕ».

Çар промышленноçĕнче концентрациллĕ лагерьсене хупнă çынсемпе те усă курнă. 1942 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче гестапон тĕп экономика департаменчĕн начальникĕ Гиммлера çапла çырса пĕлтернĕ: эпĕ концентрациллĕ лагерьсен инспекторĕсене тата лагерьсен комендантчĕсене канашлăва пухрăм та вĕсене концентрациллĕ лагерьсенчи çынсемпе çар промышленноçĕнче мĕнле усă курмалли çинчен каласа патăм, тенĕ. Вăл çак ыйтупа хăйне уйрăм приказ кăларнă. Унта çапла каланă: ĕç вăйĕпе усă курнăшăн лагерь коменданчĕ çеç ответлă пулса тăрать. «Лагере хупнă çынсен ĕç тухăçлăхĕ питĕ пысăк пултăр тесе, вĕсене чăнласах начарлатса ярисчен ĕçлеттермелле,—тенĕ çав приказра.— Вĕсен ĕç вăхăтне нимĕн чухлĕ те чакармалла мар. Вĕсен мĕн чухлĕ вăхăт ĕçлемеллине лагерь коменданчĕ татса парать. Апат çиме каякан вăхăта кĕскетес пулать. Ĕçленĕ чухне апат çиме кĕске вăхăтлăха çеç чарăнас пулать».

1942 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче Гиммлерпа юстици министрĕ çакăн пирки каласса татăлнă: еврейсене, поляксене, цыгансене, вырăссене тата украинецсене хăйсен «преступленийĕсемшĕн» малашне ахаль судсем суд тумалла мар, вĕсене СС рейхсфюрерĕ аллине памалла. Çавăн пек «обществăна хирĕç пыракан çынсене начарланса кайиччен, виличченех ĕçлеттермелле», тенĕ çав килĕшӳре.

Ют çĕршыв рабочийĕсене чуралантарас тата вĕсене тискеррĕн тыткалас ĕçе айăпланакан Шпеер хутшăннине кăтартмашкăн айăплакан Додд Шпеертан ыйтса тĕпченине çырса хунă протоколăн çак вырăнне вуласа парать:

Следователь ыйтни: «Эсир Австрие кайни çинчен каланă май çакăн çинчен те калаймăр-и: эсир унта, концентрациллĕ лагерьсене хупнă çынсемпе фабрикăсенче яланах усă курма пултăр тесе, çав фабрикăсем çывăхĕнче концентрациллĕ лагерьсем тума кайман-и?»

«Ответ: «Ку вăл 1943-мĕш е 1944-мĕш çулта пулнă. Эпĕ ăна астăваймастăп. Астуса илем-ха. Ĕç çапла пулнă: эпир фабрикăсенче концентрациллĕ лагерьсенчи çынсен вăйĕпе усă курма тăрăшнă, çавăнпа фабрикăсен çывăхĕсенче пысăках мар концентрациллĕ лагерьсем тума тăрăшнă. Анчах ку ĕç эпĕ Австрие кайнипе çеç çыхăнса тăмасть».

Айăплакан тата Розенбергран 1945 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче ыйтса тĕпченине çырса хунă протокола парать. Хăйĕнчен ыйтса тĕпченĕ чухне Розенберг—эпĕ Совет Союзĕн территорийĕнче рабочисене йăваштарах майсемпе пухма тăрăшнă, тесе ĕнентерме хăтланнă. Анчах та вăл, Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ территорисен министрĕ пулса тăрса, Заукельтен мисе рабочи пухмаллине кăтартса çырнă хутсем илнине тунман. Хĕвелтухăçĕнчи территорисенче пухма кăтартса панă чухлĕ рабочие Германие ирĕксĕрлесе çеç яма май пулнă. Розенберг çакна тунма пултарайман. Вăл тата çапла каланă: совет рабочийĕсене Германие ирĕксĕрлесе илсе каяс ыйтупа эпĕ Заукельпе тата Гитлерпа пĕр шухăшлă пулнă, тенĕ.

ДЕКАБРĔН 13-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 13-мĕшĕ (ТАСС). Декабрĕн 13-мĕшĕнчи ирхи ларура айăплакан Додд каллех ют çĕршывсенчен Германие илсе пынă рабочисем çинчен калать. Фашистла каварлашусăсем пĕтĕм тĕнчери договорсемпе конвенцисене пăсса ют çĕршывсенчен рабочисене Германие пухса пынă та вĕсене нимĕçсен çар предприятийĕсенче, фортификацисем тунă çĕрте тата ялхуçалăхĕнче ĕçлеттернĕ. Ĕç вăйĕпе усă курас тĕлĕшпе уполномоченнăй пулса ĕçленĕ Заукель каласа панă тăрăх, çавăн пекех тата Германин хĕçпăшал министерствин архивĕсенче тупнă нумай документсем тăрăх, айăплакан çапла калать: хĕçпăшал министрĕ пулнă Шпеер, Голландире гитлерла наместник пулнă Зейсс-Инкварт тата гитлерла сатрап Франк ку чухнехи чуралăха тăвас ĕçе активлăн хутшăннă. Заукель хăй те çапла каланă: Зейсс-Инкварт Голландирен Германири çар промышленноçĕ валли ирĕксĕрлесе рабочисем ярса тăнă.

Нумай документсенчен (Заукельпе Гитлер, Шпеер, Ламмерс тата ыттисем пĕр-пĕрин патне янă çырусенчен, экономикăллă план бюровĕн конференцийĕн отчечĕсенчен, айăпланакансем Заукельпе Шпеер каласа панисенчен) çакă курăнса тăрать: айăпланакан Шпеер оккупациленĕ çĕршывсенчен Германие ирĕксĕрлесе ĕç вăйĕ ярас ĕçе пуçаракансенчен пĕри пулнă. Ют çĕршывсенчен рабочисем ямашкăн Шпеер Заукельрен темиçе хут та ыйтнă. Çав рабочисене Германие ирĕксĕрлесе çеç илсе пыма май пуррине вăл лайăх пĕлнĕ.

Фашистла пур пуçлăхсем те çакна лайăх пĕлнĕ. Айăплакан Гитлер ставкинче 1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче ĕç вăйĕ тĕлĕшпе пулса иртнĕ конференцин отчетне вуласа парать. Ку отчета Ламмерс министр çырса пынă. Заукель доклачĕ тăрăх Ламмерс çапла çырнă: рабочисене ирĕксĕрлесе çеç илсе килме пулать. Гиммлер вара ĕç вăйне пухакансене хăйĕн СС отрячĕсемпе вăйлăрах пулăшу пама пулнă. Çав конференцире Шпеер çар промышленноçĕ валли тата ТОДТ организацийĕ валли ют çĕршывсенчен илсе килнĕ 1300 пин рабочи пама ыйтнă. Кунта Шпеер çакна асăрхаттарнă: Заукелĕн «вербовщикĕсем» оккупациленĕ çĕршывсенчи çар промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисене пухса килмелле мар. Гитлер Шпеер каланине ырланă та кирлĕ ĕç вăйне Заукеле кирек епле майпа та пухса килме хушнă. Конференци итогĕсем çинчен Ламмерс çапла çырнă: «ĕç вăйĕпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйĕн оккупациленĕ çĕршывсенчен сахалтан та 4 миллион рабочи пухса килмелле».

Ĕç вăйĕн çăлкуçĕсем ерипенех пĕтсе пынă. Шпеер çине тăрсах ыйтнă пулин те Заукель ăна çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ парса тăрайман. Ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисене Шпеер çав тери йывăр ĕçлеттерме хушнă. Çавна пула вара рабочисем темиçе уйăх ĕçленĕ хыççăнах стройран тухнă. Çакă ĕнтĕ ĕç вăйĕ чакса пынин тĕп сăлтавĕ пулнă. Ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем ĕç лагерĕсенче çав тери йывăр условисенче пурăннă. Ĕç лагерĕсемпе концентрациллĕ лагерьсем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та пулман. Çар завочĕсен директорĕсене, тĕреклетнĕ районсем тунă çĕрте ĕçлекен рабочи батальонсен начальникĕсе-

Шпеер ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисенчен мĕн илме май пуррине пурне те сăхса илме хушнă, ку тĕлĕшпе нимĕнле майсем умĕнче те чарăнса тăмалла мар, тенĕ вăл.

Шпеер сĕннĕ тăрăх, Заукель çар предприятийĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисене 100 пин çын ытла янă. Çак çынсем çав тери хăрушă условисенче пурăннине свидетельсем лайăх кăтартса параççĕ. Гитлерла надсмотрщиксем тыткăнри çар çыннисене чи пĕчĕк айăпшăнах патаксемпе е резина патаксемпе вĕлермеллех хĕненĕ. Вĕсен мĕнпур апачĕ те пĕр татăк çăкăр е чĕрĕ çĕрулми тупма хăтланни çеç пулнă.

Айăплакан Додд çапла калать: айăпланакан Шпеер, çавăн пекех тата Заукель ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисене хăрушă условисенче тытса усранăшăн айăплă. Çавăн пек условисенче тытса усранине пула ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем темиçе вуншар пин çын вилнĕ, темиçе вуншар пин çын сусăрланса юлнă.

Вунă минутлăх перерыв хыççăн, айăплакан Додд трибунала фашистсен концентрациллĕ лагерĕсем çинчен калакан документсене парать. Айăплакан çапла калать: концентрациллĕ лагерьсем Германири гитлерла режимăн тĕп хăвачĕ пулнă. Çав лагерьсене пула гитлеровецсем хăйсен влаçне çирĕплетнĕ, нимĕç халăхне хăйсен идеологине пăхăнтарнă. Концентрациллĕ лагерьсем вĕсем çавăн пекех тата союзлă çĕршывсен халăхĕсене пăхăнтармалли хĕçпăшал пулнă. Фашистсем çынсене судсăр-мĕнсĕрех концентрациллĕ лагере хупса лартнă та унта вара вăхăта шута илмесĕр тытса усранă. Гитлер канцлер пулнă хыççăн, тет айăплакан, фашистла каварлашусăсем, 1933 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче кăларнă чрезвычайнăй декрет тăрăх, граждансен мĕнпур ирĕклĕхне пĕтерсе хунă. Çак декрет тăрăх, гестапона çынсене судсăр-мĕнсĕрех тĕрмене хупса лартма ирĕк панă. Герхард Сигар свидетель çырса кăтартса пани тăрăх, айăплакан çапла калать: гитлеровецсем влаçа хăйсен аллине иличченех концентрациллĕ лагерьсене хăйсен тăшманĕсене аркатса тăкмалли мел вырăнне хунă.

Малалла айăплакан концентрациллĕ лагерьсене гитлеровецсем еврей халăхне пĕтермелли мел вырăнне хунине кăтартса парать.

Вăрçă пуçланнă хыççăн гитлеровецсем хăйсен террорĕн мĕнпур системине оккупациленĕ çĕршывсене куçарнă.

Тыткăнри çар çыннисене концентрациллĕ лагерьсенче мĕнле тытса усранине кăтартса парас майпа, айăплакан 1945 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче Америкăн 3-мĕш çарĕн штабĕ Шлоссенбургри концентрациллĕ лагере тĕрĕсленин хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Çав докладра çапла каланă: 1941 çулта Шлоссенбургри лагерьте тыткăна лекнĕ совет çар çыннисене хупса усрама çĕнĕ çурт тунă. Унта хупнă икĕ пин çынран 102 çын çеç чĕрĕ тăрса юлнă. Малалла çав документра çапла каланă: Шлоссенбургри лагерьте вилнĕ çынсем хушшинче совет граждансем, совет çар çыннийĕсем, çавăн пекех тата итальянецсем, бельгиецсем, поляксем, чехсем, венгерсем, акăлчансем тата американецсем пулнă. Çав лагерьте мĕнле-мĕнле халăх çынни мĕн чухлĕ пулнине шута илсе пĕтерме çук, мĕншĕн тесен ăна тунăранпа—1938 çултанпа унта 29 пин çын ытла вилнĕ.

Тарма хăтланнă тыткăнри çар çыннисене çынсене вĕлерме юри тунă концентрациллĕ лагерьсене хупнă. Çавăн пек пĕр лагерь Маутхаузенра пулнă.

Гитлеровецсем çĕршывсене оккупацилесе пынă май вĕсем концентрациллĕ лагерьсене пĕтĕм Европипе туса пынă.

Айăплакан трибунала пысăк карта кăтартать. Çав картă çинче концентрациллĕ лагерьсем ăçта-ăçта пулнипе кăтартса панă. Çавăн пек лагерьсем Германире хăйĕнче ытларах пулнă иккен. Кашни пысăк лагерь таврах унăн филиалĕсем пулнă.

Юлашкинчен айăплакан çав лагерьсенче ларакан çынсенчен мĕнле мăшкăлани çинчен каласа парать.

Декабрĕн 13-мĕшĕнчи ирхи лару çакăнпа хупăнать.

Фашистла пропагандăн çĕнĕ мыскари

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Американецсен Нюрнбегра тухса тăракан «Мелле пейтунг» ятлă хаçатĕнче çак кунсенче Геринг каласа панине пичетлесе кăларнă. Геринг çав сăмаха хăйĕн адвокачĕ урлă Ассошиэйтед Пресс агентствин представительне панă. Унта гитлерла шайкăн пуçлăхĕ фашизма тата гитлерла режима намăса пĕлмесĕр мухтать.

Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Совет Союзĕн тĕп айăплаканĕ Руденко юлташ паян Айăплакансен комитечĕн ларăвĕнче çавна хирĕç протестленĕ. Вăл айăпланакансене фашистла пропаганда тăвас ĕçре Германин Америка оккупациленĕ пайĕнче нимĕç халăхĕ валли кăларса тăракан хаçатпа усă курма памалла марри çинчен каланă, айăпланакансене çав хаçатпа усă курма темиçе хут та май панă ĕнтĕ, тенĕ.

Руденко юлташ тата çапла каланă: çав киревсĕр япалана пĕтерсе лартмалла, айăпланакансем валли çакăн пек режим тумалла: малашне вĕсем хаçатсенче пичетлеме тĕрлĕ заявленисем, пĕлтерӳсем тата ыттисене те пама ан пултарччăр, тенĕ.

Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, айăплакансен комитечĕ Руденко юлташăн протесчĕпе килĕшнĕ те ăна пăхса тухма трибунала панă. Трибунал çак ыйтăва пăхса тухса хăйĕн решенине эрнекун йышăнать пулмалла.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Декабрĕн 11-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсен ĕçне пăхакан судăн ларăвĕнче «Барбаросс планĕ» текен документа вуласа панă. Ку документран çакă лайăх курăнса тăрать: Финляндин ĕлĕкхи руководительĕсем Совет Союзне тапăнас ĕçе хутшăнас тĕлĕшпе малтанах тĕплĕн каласса татăлнă. Финлянди Германи майлă пулса Совет Союзне хирĕç вăрçассине Гитлерăн агрессиллĕ планĕсенче тĕплĕн кăтартса хунă. Декабрĕн 11-мĕшĕнче суд ларăвĕн иккĕмĕш пайĕнче айăпланакан Рюти сăмахне итлеме тытăннă. Çав сăмаха Рюти малтанах çырса хатĕрленĕ, унăн тĕллевĕ—Совет Союзĕпе вăрçма тунă кирек мĕнле плана та пурнăçа кĕртме тăрăшнă çынсене тӳрре кăларасси пулнă. Декабрĕн 11-мĕшĕнче Рюти хăйĕн сăмахĕн çуррине те вуласа пĕтереймен.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче суд ларăвĕ пуçлансанах суд председателĕ Меллер юстици канцлерĕнчен Тарьяннерен: сирĕн мĕн те пулин каламалли çук-и? тесе ыйтнă. Тарьянне çапла каланă: «Рютин ĕнер каланă сăмахне кура, çапла шутлама пулать: унăн малалли сăмахĕнче хупă ларура пăхса тухмалли ыйтусем пулма пултараççĕ. Эпĕ судран Рютин малалли сăмахне хупă ларура пăхса тухассине сӳтсе-явма ыйтатăп, тенĕ. Рютие хӳтĕлекен Прокопе çакна хирĕç каланă.

Çакăн хыççăн суд канашлама тухса кайнă. Судăн ларăвĕ çĕнĕрен 12 сехет те 45 минутра пуçланнă. Суд çапла йышăннă: хальхи вăхăтра хупă лару тумашкăн çителĕклĕ сăлтав çук, тенĕ. Çавăнпа пĕрлех суд айăпланакан Рютие айăпласа çырнă актра кăтартнă тăрăх кăна калама хушнă. Апла пулин те, Рюти малалла та малтанхи пекех каланă. Çавăнпа суд айăпланакан Рютие калама чарнă та çĕнĕрен канашлама тухса кайнă. Вара суд айăпланакан Рютие Пĕрлешнĕ нацисене хур тума пултаракан сăмахсене текех асăнма хушман. Рюти хăйĕн сăмахне уççăнах Совет Союзне хирĕç пропаганда сарас тĕллевпе çырнă. Унăн сăмахне итлесси тата темиçе куна пымалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ Саратоври государство консерваторийĕнчи Чăвашсен опера студине вĕренме илет. Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕн начальникĕ ячĕпе 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен заявлени памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ.

3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, [illegible]ганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство [illegible] — 0-23.

НТ 04033 Типография № 1 [illegible] АССР. [illegible] Тираж 16.000 экз.